# Пирĕн малашлăх. Наци проекчĕсем

## «Демографи»

**«Демографи» наци проекчĕн бюджечĕ пĕтĕмĕшле 3105,2 млрд тенкĕпе танлашать. Çак наци проекчĕн шайĕнче федерацин 5 проекчĕ пурнăçланать.**

**Наци проектне пурнăçлани финанс пулăшăвне парса çемьесен пурнăçне лайăхлатма май памалла – тĕрлĕ тӳлев, пособи, çăмăллатнă ипотека кредичĕ, хĕрарăмсене декрет отпускĕ вăхăтĕнче тӳлевсĕр вĕрентесси, искусственнăйла майпа ачаллă пуласси. Çакă ача çуратассин кăтартăвĕ çине, çынсем хăйсен пурнăçĕнчи активлă тапхăра тăсни тата пурнăç тăршшĕ вăрăмланасси çине ырă витĕм кӳмелле. Нацпроект пурнăçланни пенсиччченхи ӳсĕмрисене професси пĕлĕвне илме, çавна май ĕç рынокĕнче конкурентлă пулма май памалла. Нацпроект шайĕнчи мероприятисем пурĕ 450 пин çынна ăсталăха ӳстерме тата урăх профессие вĕренме май туса памалла. Нацпроект çынсене сывă пурнăç йĕрки тытса тата тĕрĕс апатланса пурăнма хистемелле, тăташах спорт занятийĕсене çӳрекен, хутшăнакан çынсен йышне 55 процент таран ӳстерме пулăшмалла.**

# Аслă ăрури çынсен пурнăçне лайăхлатас тĕллевпе

«Демографи» наци проекчĕ шайĕнче Чăваш Енре регионти 5 проект пурнăçланать. Вĕсем Чăваш Ен Ĕç министерстви, Сывлăх сыхлав министерстви, Спорт министерстви тата Вĕренӳ министерстви пĕрле çыхăнса ĕçленипе пурнăçланаççĕ. Проект пĕтĕмĕшле çемьесене ача çуралнипе çыхăннă пулăшăва параccипе, ачаллă хĕрарăмсене ĕçлеме майсем туса параccипе, виçĕ çул тултарман ачасене шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕсенче вырăнсем туса параccипе, сывă пурнăç йĕркине тытса пымалли условисем йĕркелессипе, çынсен пурнăç тăршшĕне вăрăмлатассипе тата пурнăçа лайăхлатассипе, физкультурăпа тата спортпа туслă пулма майсем туса параccипе çыхăннă.

Çапла «Финансовая поддержка семей при рождении детей» регион проекчĕшĕн Ĕç министерстви яваплă пулса тăрать, «Содействие занятости женщин – создание условий дошкольного образования для детей в возрасте до трех лет» проектшăн – Ĕç министерствипе Вĕренӳ министерстви, «Старшее поколение» проектшăн – Ĕç министерстви тата Сывлăх сыхлав министерстви, «Укрепление общественного здоровья» проектшăн – Сывлăх сыхлав министерстви, «Спорт – норма жизни» проектшăн – Спорт министерстви.

Паян «Старшее поколение» регион проекчĕ çинче чарăнса тăрар. Вăл тивĕçлĕ канăва тухнисене пырса тивет. Хальхи вăхăтра республикăра вĕсем 315 пин çынна яхăн е Чăваш Енре пурăнакансен 25 процентĕнчен ытларах. Республикăра йышăннă тата пурнăçланакан патшалăх пулăшăвĕн мерисем тата социаллă пулăшу парасси лайăхланнăран 2012 çултанпа çынсен вăтам пурнăç тăршшĕ унччченхинчен 2 çул ытларах вăрăмланнă. Çапла 2019 çулта çак кăтарту республикăра 72,9 çулпа танлашнă. Юлашки ултă çулта аслă ăрури çынсен шучĕ 25 процент чухлĕ пысăкланнă, 100 çул урлă каçнисен шучĕ вара 1,9 хут ӳснĕ.

«Старшее поколение» регион проекчĕн тĕп тĕллевĕ аслă ăрури çынсен пурнăçне лайăхрах туma патшалăх пулăшăвĕн мерисемпе тивĕçтересси пулса тăрать.

Проектра палăртнă тăрăх, вăл вĕçленнĕ тĕле тивĕçлĕ канури çынсене профилактика тĕрĕслевĕсене, вăл шутра диспансеризацие явăçтарасси анлăрах пулмалла; професси вĕренĕвĕн тата хушма пĕлӳ курсĕсенче вĕреннĕ пенсиччченхи ӳсĕмри граждансем ытларах пулмалла, çынсен сывă та активлă пурнăç тăршшĕ ӳсмелле тата ытти те.

Республикăри аслă çулти çынсен сывлăхне Улатăр районĕнчи сывлăха çирĕплетмелли «Вега» социаллă центрта сипленме нумайăшĕ пĕлет. Проект шайĕнче аслă ăрури çынсене хăтлăрах условисемпе тивĕçтерес тесе унта реконструкци ĕçĕсене пурнăçлаççĕ. Çапла ку центра çулсеренех республикăри 1000 ветерана сывлăха çирĕплетмелли курссене явăçтарма май пулĕ.

Кунсăр пуçне, проектпа пăхса хунă тăрăх, 50 çул тултарнă тата аслăрах çынсене, çавăн пекех пенсиччченхи ӳсĕмрисене ĕçпе тивĕçтерессине те тĕрлĕ мероприяти пурнăçлаççĕ. 2020 çулта акă 489 çынна вĕренӳ курсĕсене явăçтарма палăртнă. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта 175 çын вĕренӳ курсĕсене вĕреннĕ, 721 çын вĕренме тытăннă.

Ялта пурăнакан, 65 çултан аслăрах çынсене медицина учрежденийĕсене илсе çитерме республикăра ятарлă автотранспорт туяннă. Муркаш районĕнчи халăха социаллă пулăшупа тивĕçтерекен центра та çакăн пек ятарлă икĕ машина пĕлтĕр декабрь уйăхĕнче çитрĕ. Вĕсенче коляскăпа çӳрекен инвалидсене те кĕрсе тухма май туса панă.



Центр директорĕ Ольга Иванова пĕлтернĕ тăрăх, çак ятарлă транспорт декабрьте пурĕ 4 хут çула тухнă. Çапла районти 19 çынна больницăна çитсе килме пулăшнă. Кăçал январь – март уйăхĕсенче ятарлă машинăсем пурĕ 19 хутчен çула тухнă, 72 çынна медицина учрежденине çитсе килме май туса панă. Март вĕçнелле коронавирус сарăлма тытăннипе пула вара кун пек «çул çӳревсене» вăхăтлăх чарса лартма тивнĕ.

Аслă ăрури çынсем сывă пурнăç йĕркине тытни вĕсене спорт ăмăртăвĕсене хастар хутшăнма та пулăшать. Кăçал Чăваш Республикин аслă ăрури çынсен спартакиадине муркашсем те хутшăнчĕç. Темиçе тапхăрпа спортăн тĕрлĕ енĕпе иртекен ăмăртура пирĕн районта пурăнакан Валерий Павловпа Зоя Алексеева сĕтел çи теннис вăййинче хутшăннисен малтанхи теçеткине кĕме пултарнă, шашка вăййинче республикăра Анфиса Анисимовăна çитекенни пулман. Çапла вара активлă пурăнни ӳт-пӳшĕн те, ăс-тăнăшăн та усăллă.

# Пулăшусăр юлмаççĕ

Пĕлтĕр, çĕршывра 2019 çултан тытăнса 13 наци проекчĕ пурнăçа кĕме тытăнчĕ. Пурте вĕсем питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ, пурне те вĕсене патшалăх умĕнче тăракан калăпăшлă задачăсене тĕпе хурса туса хатĕрленĕ. Апла пулин те «Демографи» наци проектне чи пĕлтерĕшлисенчен пĕри темелле пулĕ. Мĕншĕн тесен, пĕтĕмĕшле илсен, ытти наци проекчĕ те унпа тӳрременех е епле майпа та пулин çыхăннах.

«Демографи» наци проекчĕ шайĕнче федерацин тата республикăн аслă ăру çыннисене пулăшу мелĕсемпе тивĕçтермелли тата вĕсен пурнăç шайне лайăхлатса пымалли «Старшее поколение» проекчĕсем пурнăçа кĕреççĕ. Проектсем Чăваш Республикин «Социальная поддержка граждан» патшалăх программипе тачă çыхăннă.

**Чăваш Республикин Ĕç тата социаллă хӳтлĕх министерствин «Социаллă пулăшупа тивĕçтерекен центр» хысна учрежденийĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Валентина АНИКИНА паянхи калаçура вăрçă çулĕсенчи тыл ĕçченĕсене, ĕç ветеранĕсене, Чăваш Республикин ĕç ветеранĕсене, реабилитациленĕ çынсене, политика репрессийĕсене пула шар курнисене хальхи вăхăтра тивĕçтерекен пулăшу мелĕсем пирки каласа пама кăмăл турĕ:**

### Вăрçă çулĕсенчи тыл ĕçченĕ

*Социаллă пулăшу мелĕсем:*

– тыл ĕçченне пенсие тухиччен ĕçленĕ вăхăтра хăш поликлиника е ытти медицина учрежденийĕ çумне çирĕплетнĕ, малашне те ăна çавăнта йышăнма тивĕç;

– Чăваш Республикинчи граждансене тӳлевсĕр медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерессин патшалăх гарантийĕн программи шайĕнче медицина пулăшăвĕпе черетсĕр тивĕçтереççĕ;

– уйăхсерен 1044 тенкĕ тӳлесе тăраççĕ.

***Социаллă пулăшупа усă курма тивĕççине ĕнентерекен документ:***

– Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕн удостоверенийĕ (федерацин «О ветеранах» саккунĕн 20-мĕш статйипе пăхса хунă çăмăллăхсене илме право пурри пирки паллă туни пулмалла);

– тыл ĕçченĕн удостоверенийĕ;

– Раççей Федерацийĕн гражданинĕн паспорчĕ.

### Ĕç ветеранĕ, Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ

*Социаллă пулăшу мелĕсем:*

– тыл ĕçченне пенсие тухиччен ĕçленĕ вăхăтра хăш поликлиника е ытти медицина учрежденийĕ çумне çирĕплетнĕ, малашне те ăна çавăнта йышăнма тивĕç;

– Чăваш Республикинчи граждансене тӳлевсĕр медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерессин патшалăх гарантийĕн программи шайĕнче медицина пулăшăвĕпе черетсĕр тивĕçтереççĕ;

– вырăнти телефон çыхăнăвĕн сечĕн абонент линийĕпе усă курнăшăн тӳлев хакĕн 50 процентнĕ чухлĕ компенсаци параççĕ;

– уйăхсерен 1100 тенкĕ тӳлесе тăраççĕ (ĕçлеменнисене).

***Социаллă пулăшупа усă курма тивĕççине ĕнентерекен документ:***

– ĕç ветеранĕн, Чăваш Республикин ĕç ветеранĕн удостоверенийĕ;

– пенси удостоверенийĕ;

– Раççей Федерацийĕн гражданинĕн паспорчĕ;

– ĕç кĕнеки.

### Реабилитациленĕ çын

*Социаллă пулăшу мелĕсем:*

– сывалма е канма кайма санаторипе курорт путевкипе чи малтан тивĕçтереççĕ;

– Чăваш Республикинчи граждансене тӳлевсĕр медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерессин патшалăх гарантийĕн программи шайĕнче медицина пулăшăвĕпе черетсĕр тивĕçтереççĕ;

– Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ пăхса хунă условисемпе телефон тӳлевсĕр кĕртсе парӑççĕ;

– уйăхсерен 2634 тенкĕ тӳлесе тăраççĕ.

***Социаллă пулăшупа усă курма тивĕççине ĕнентерекен документ:***

– реабилитациленĕ çынсем валли СССР Правительстви çирĕплетнĕ пĕрлехи йышши свидетельство;

– право сыхлав органĕ (е уполномоченнăй орган) реабилитациленĕ çынсене паракан ятарлă справка;

– Раççей Федерацийĕн гражданинĕн паспорчĕ.

### Политика репрессине пула шар курнă çын

*Социаллă пулăшу мелĕсем:*

– сывалма е канма кайма санаторипе курорт путевкипе чи малтан тивĕçтереççĕ;

– Чăваш Республикинчи граждансене тӳлевсĕр медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерессин патшалăх гарантийĕн программи шайĕнче медицина пулăшăвĕпе черетсĕр тивĕçтереççĕ;

– уйăхсерен 2345 тенкĕ тӳлесе тăраççĕ.

***Социаллă пулăшупа усă курма тивĕççине ĕнентерекен документ:***

– политика репрессине пула шар курнă çынсем валли СССР Правительстви çирĕплетнĕ пĕрлехи йышши свидетельство;

– право сыхлав органĕ (е уполномоченнăй орган) политика репрессине пула шар курнă çынсене паракан ятарлă справка;

– Раççей Федерацийĕн гражданинĕн паспорчĕ.

**Асăрхаттарни.** Ку е вăл çăмăллăхпа усă курма тивĕç çыннăн документсене районти социаллă хӳтлĕх пайне е патшалăх тата муниципалитет услугисен нумай функциллĕ центрне (МФЦ) илсе пырса памалла.

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***